*Коллеги*

# ПĔТĔМЛЕТӲ ТАТА МАЛАШЛĂХ ÇУЛ-ЙĔРĔ

***Çак кунсенче ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта 2012 çул кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕç, кăçалхи тĕллевсене палăртрĕç.***

Аса илтерер: ку ведомство 2012 çулта çу уйăхĕн вĕçĕнче йĕркеленнĕ. Валентина Андреева министр каланă тăрăх – çĕнĕ министерство йĕркелӳ тапхăрĕн йывăрлăхĕсенчен чылайăшне чăтса ирттернĕ ĕнтĕ, ĕç-хĕлĕн тĕп çулйĕрне тата стратеги тĕллевĕсене палăртнă. «Тĕп тĕллевсен шутĕнче – чи малтанах патшалăх пулăшу ĕçĕсене электрон мелпе кӳресси, ведомствăсен хушшинчи электрон хутшăнусен тытăмне йĕркелесси, универсал электрон карттăна хута ярасси, МИХсен çыхăнăвне тĕрĕслесе тăрасси, Интернет инфратытăмне аталантарасси», – терĕ Валентина Владимировна. Министр çивĕч ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Вĕсенчен пĕри – массăллă информаци хатĕрĕсем валли кадрсем хатĕрлесси. Хаçат-журналта, радиопа телекуравра ĕçлекен журналистсен вăтам ӳсĕмĕ паянхи кун 44 çулпа танлашать. Хăш-пĕр редакцире ку кăтарту тата та пысăкрах, тĕслĕхрен, 52 çул. «Малашне те çакăн пекех пулсан МИХсенче ыран кам ĕçлĕ? Çавăнпа та вĕрентӳлĕх /наставничество/ практикипе анлăрах усă курмалла, талантлă çамрăксене тупса вĕсене пултарулăх процесне явăçтармалла», – пĕлтерчĕ Валентина Андреева. */Сăмах май: «Хыпар» Издательство çуртĕнче ĕçлекенсен вăтам ӳсĕмĕ – 42 çул/.*

Массăллă информаци хатĕрĕсем, кĕнеке кăларакан тата полиграфи организацийĕсем пĕлтĕр мĕнле ĕçлени пирки министр çумĕ Любовь Шемарина каласа кăтартрĕ. Хаçат-журнал, радио тата телекурав обществăри хутшăнусене пысăк витĕм кӳрессĕ, халăха çĕнĕ хыпарсемпе, регионра тата çĕр-шывра мĕн пулса иртнипе паллаштарассĕ. Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăра массăллă информацин 185 хатĕрне регистрациленĕ, вĕсенчен 133-шĕ – пичет кăларăмĕ. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ 2012 çулта ирттернĕ ыйтăм кăтартăвĕсем тăрăх – регионра пурăнакансем республика хаçат-журналне центрта тухса тăраканнисемпе танлаштарсан ытларах вулаççĕ /27,3% тата 9,4%/. Халăхăн 40% икĕ çак ушкăнрисене те вулать. Хаçат-журнал тиражĕ чакса пыни – тĕнче шайĕнни туртăм. Чăваш Енре вара республика тата район /хула/ хаçачĕсемпе журналĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ малтанхи шайрах сыхланса юлнă, хăш-пĕр кăларăмăн ӳснĕ те. Тĕслĕхрен, «Хыпар» Издательство çурчĕ кăларса тăракан «Çамрăксен хаçачĕн» вулав аудиторийĕ 14%, «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатăн 2,3% пысăкланнă. Район хаçачĕсенчен нумайăшĕн çырăнтару тиражĕ ӳсни те савăнтарать. Шел те, хăш-пĕр кăларăм вулакансен пĕр пайне çухатнă.

Массăллă информаци хатĕрĕсене аталанма, журналистсен професси шайне ӳстерме пулăшас тĕллевпе МИХсен социаллă проекчĕсен конкурсне ирттерессĕ. Ăна 2006 çултанпа йĕркелессĕ. 2012 çулта асăннă конкурса 105 заявка тăратнă /2011 çулта – 98/, 39 проекта – çĕнтерӳçĕсен йышне лекнисене – патшалăх пулăшăвĕ панă. Хаçат-журнал, радио тата телекурав редакцийĕсем Раççей тата тĕнче шайĕнчи конкурссемпе грант проекчĕсене хутшăнаççĕ. Пĕлтĕр 3 Издательство çурчĕ тата 1 хаçат Раççей шайĕнчи грантсене тивĕçнĕ. 4 томлă «Чăваш энциклопедине» çулсеренех йĕркелекен «Çулталăк кĕнеки» наци конкурсĕн /Мускав/ Дипломĕпе чысланă.

Информаци технологийĕсен тытăмĕн кăтартăвĕсемпе министр çумĕ Алексей Новиков паллаштарчĕ. «Паянхи кун тĕлне телекоммуникацисен, почта çыхăнăвĕн тата информатизаци тытăмĕн аталанăвĕнче пысăк çитĕнӳ тума май килнĕ. Информаци технологийĕсен тата Интернет тытăмĕ пирки те çавнах калама пулать», – терĕ вăл. Раççей гуманитари ăслăлăх фончĕ 2012 çулхи кĕркунне ыйтăм ирттернĕ, унăн пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх хальхи вăхăтра республикăри халăхăн 70% компьютер пур: çав шутран 75,5% – хулара, 60,3% – ялта. 66,2% Интернетпа çыхăннă. ЧР Вĕренӳ министерствин кăтартăвĕсем те савăнтараççĕ: паянхи кун республикăра 6,4 вĕренекене пĕр компьютер тивет /2011 çулта – 8,4 вĕренекене/.

Министерство «электрон правительство» элеменчĕсене йĕркелес енĕпе хастар ĕçлет, унăн тĕп инструменчĕсенчен пĕри – Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕ. Çак портал Раççей влаç органĕсен интернет-ресурсĕсен хушшинчи рейтинг пĕтĕмлетĕвĕпе – уйăхсерен 2-3-мĕш вырăнсенче. 700 ытла сайта пĕрлештерсе тăраканскере кунне 9,5 пин çын «кĕрсе» пăхать. Ку порталпа паллашакансен йышне ӳстерес тĕллевпе пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче «нуль зони» социаллă проекта хута янă. Ăна пула карас телефонĕ урлă cap.ru тата gosuslugi.cap.ru сайтсене тӳлевсĕрех «кĕме» пулать. Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталне кăçал çĕнетесшĕн. 2013 çулта унта «Харпăр хăй кабинечĕ» уйрăм хушăнĕ, унăн пулăшăвĕпе çынсем хăйсен ыйтăвне татса парас ĕç мĕнлерех пынине тĕрĕслеме пултарĕç. Унсăр пуçне çак сайтăн япăх куракансем валли хатĕрленĕ версине ĕçе кĕртĕç.

Министерство çавăн пекех патшалăх пулăшăвĕсене электрон мелпе кӳресси çине куçас ĕçе, универсал электрон карттăсемпе çыхăннă проекта тĕрĕслесе тăрать. Хальхи вăхăтра патшалăх тата муниципалитет пулăшу ĕçĕсен 69 тĕсĕпе электрон мелпе усă курма пулать. Ведомствăсен хушшинчи электрон хутшăну тытăмĕнче – ЧР ĕç тăвакан влаçăн 15 органĕ, 26 районпа хула тата 291 ял тăрăхĕ. Универсал электрон карттăна республикăри 40 çынна панă, ăна илес тĕллевпе 300 яхăн ыйту çырнă.

Коллеги ларăвне хутшăннисем хăйсене хумхантаракан ыйтусене хускатрĕç, вĕсене мĕнле татса пама май килнине сӳтсе яврĕç. Чи маттуррисемпе хастаррисене ЧР Информаци политикин тата Культура министерствисен Хисеп хучĕсемпе чысларĕç.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Пирĕн мухтавлă ентешсем*

# ШĂПЛАТ ПАТТĂРĔ



***Костромари ял хуçалăх академийĕнче 1962 çултанпа ĕçлекен Клавдия Васильевна Петрова 2012 çулхи юпа уйăхĕнче 85 çул тултарчĕ. Вăл – пирĕн ентеш, Вăрмар районĕнчи Шăплатра çуралса ӳснĕ. Социализм Ĕçĕн Геройĕ. Ял хуçалăх ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.***

Кирек ăçта кайсан та, кирек ăçта пурăнсан-ĕçлесен те тăван ене манмасть Клавдия Васильевна. Килсе çӳрет. Çыру та ярать. Манăн кунта пĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăрас килет. К.Петрова Вăрмар радио хыпарлавĕн редакторĕ пулнă Г.Матвеевпа – ман аттепе – тачă çыхăну тытнă. Герман Матвеевич ун çинчен район тата республика хаçачĕсенче пĕрре кăна мар çырнă. Мухтавлă ентешĕмĕр çырусенче пĕлтерекен хыпарсемпе – выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕлĕхсемпе, малта пыракан опыт тĕслĕхĕсемпе радио кăларăмĕсенче усă курнă.

Клавдия Васильевна хăйĕн пурнăçри, ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен ăна пĕлтерсех тăнă. «Диссертаци хӳтĕлерĕм», – тенĕ акă 1980 çулта Г.Матвеев патне янă телеграммăра. Хăвăртрах çитерме васканă ĕнтĕ савăнăçлă çав хыпара Вăрмар тăрăхне – хăй çуралса ӳснĕ çĕр-шыва. Шăплат ялне тăванĕсем патне килсен те радио хыпарлав редакцине кĕмесĕр кайман вăл.

Герман Матвеевич хăй те Костромара ун патĕнче пулса курнă. Кун пирки вăл 1975 çулхи çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче дневникĕнче çапла çырнă: «...Манăн паян 4 сехет тĕлне Клавдия Васильевна патне çитмелле. Николай Максимовичпа Осыпная урамне васкарăмăр. Ăшшăн сума суса, тараватă кĕтсе илчĕ пире Клавдия Васильевна. Хваттерĕ чаплă. Пӳлĕмсене пăхса çаврăнтăмăр. Библиотекăра, ĕç пӳлĕмĕнче пултăмăр. Чылайччен калаçса лартăмăр. Кил хуçи Вăрмарсем мĕнле пурăнни, Шăплатпа Энтриялĕнчи тăванĕсем çинчен ыйта-ыйта пĕлнĕ, салам каласа ячĕ. Пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр. Клавдия Васильевна пире ырă çул сунса ăсатрĕ, троллейбуспа лартса ячĕ».

Нумай çул иртсен, 2007 çулхи юпа уйăхĕнче, дневникри адреспа эпĕ те Клавдия Петрова патне çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа саламласа тата Герман Матвеевича хисеплесе çыхăну тытса пурăннăшăн тав туса çыру ятăм. Вăл нумай кĕттермерĕ, çийĕнчех хуравларĕ:

«Сывă-и, Галина Германовна! Сире çырушăн тав тăватăп. Герман Матвеевич хĕрĕнчен çыру илесси çинчен шутламан та эпĕ. Ашăр çырăвĕсене, дневникне упранăшăн пысăк тав. Эпир пĕр-пĕрин патне çыру час-часах çырнă. Юлашкинчен унпа Ыхраçырми ялĕнче хамăн иккĕмĕш сыпăкри шăллăм патĕнче тĕл пулнăччĕ. Ун чухне эпир аннепе иксĕмĕр тăвансене курма пынăччĕ. Вĕсем халĕ питĕ сахалланса юлнă. Павăл ачисемпе кăна çыхăну тытатпăр. Пĕр хĕрĕ, Тамара, Пысăк Енккассинче пурăнать. Ытти ачи Шупашкарта».

Малалла вăл Шупашкара килсе курни çинчен çырнă. Республикăн Патшалăх Канашĕ хисеп туса чĕнсе янă ăна. Клавдия Васильевна Шупашкарпа питĕ интересленсе паллашнă, нумай çĕре çитсе курнă. Пур çĕрте те ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çакăншăн вăл питĕ савăннă.

Çавăнтанпа эпĕ те çыхăну тытатăп унпа. Клавдия Петрова ял хуçалăх академийĕнче ĕçлеме пăрахман-ха: лекци вулать, çамрăксемпе тĕл пулать. Çуллахи вăхăтра хăйĕн пахчинче тăрмашать, темĕн тĕрлĕ çимĕç çитĕнтерет.

Нумаях пулмасть Костромана телефонпа шăнкăравларăм. Клавдия Васильевнăн уçă та çирĕп сассине илтсен питĕ хĕпĕртерĕм. Вăл мана юбилей ячĕпе саламланăшăн тав турĕ, çывăх вăхăтра, йĕркеллĕ пулсан, тăван Чăваш çĕр-шывне килсе курма шухăшлани çинчен пĕлтерчĕ, ун чухне тĕл пулăпăр-ха терĕ. Ăна мĕн палăртнине пурнăçа кĕртме пĕтĕм чунтан çирĕп сывлăх, вăй-хал сунас килет.

Мухтавлă ентешĕмĕрĕн пурнăçĕпе кĕскен паллашарха.

Вăрçăччен хĕр Урнар шкулĕнче вĕреннĕ. 1940 çулта вĕсен çемйи Кострома облаçне куçса кайнă. Часах вăрçă пуçланнă. Ашшĕпе икĕ пиччĕшне фронта ăсатнă. Киле юлнă пилĕк ачаран Клава чи асли пулнă. Çемьене пулăшас тесе вăл «Караваево» совхозра ĕçлеме пуçлать: малтан уй-хир бригадинче вăй хурать, унтан ĕне фермине куçать.

Çакăнтан пуçланнă Шăплат хĕрĕн йывăр та мухтавлă çулĕ.

Хастар доярка ĕнесенчен сĕт суса илессине çулсеренех ӳстерсе пынă, чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă. Çавăншăн ăна 1948 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Çакă К.Петровăна çĕнĕ вăй-хăват хушнă, тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарнă. 1949 çулта ăна Социализм Ĕçĕн Геройĕн ятне, унпа пĕрле «Çурлапа Мăлатук» ылтăн медальпе Ленин орденĕ панă. Клавдия Петрова ун чухне çирĕм иккĕре пулнă.

Клавдия Васильевна фермăра сакăр çул ытла – 1950 çулччен ĕçленĕ. Вара малалла вĕренме шутланă. 1954 çулта Кологоври зоотехникума чи лайăх паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн Мускаври К.А.Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академине вĕренме кĕнĕ. Диплом ĕçне хӳтĕлесен патшалăх экзамен комиссийĕ ăна аспирантурăна кайма сĕннĕ. Клавдия Петрова килĕшнĕ. Ку 1959 çулта пулнă. Тепĕр виçĕ çултан диссертаци хӳтĕлесе пирĕн ентеш ял хуçалăх ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăнă.

Унтан – каллех Караваево. К.В.Петрова сакăр çул унти ял хуçалăх институчĕн майракаллă шултра выльăх кафедрин доцентĕнче, тăватă çул проректорта ĕçленĕ. Докторантурăра вĕренсе «Кострома ăрачĕллĕ выльăхран аш-какай илессине ӳстермелли майсем» темăпа диссертаци хӳтĕлет, ял хуçалăх ăслăлăхĕсен докторĕн ятне тивĕçет.

К.В.Петрова – 120 ытла ăслăлăх статйин авторĕ. Ăна темиçе хутчен Кострома облаç Канашĕн депутатне суйланă. Вăл КПСС XXIV съезчĕн делегачĕ пулнă. 25 çул ытла Мире хӳтĕлекенсен облаç комитетне ертсе пынă. Раççей Федерацийĕн аслă шкулăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Кострома облаçĕн хисеплĕ гражданинĕ. Ăна «Ĕçлев. Паттăрлăх. Чыс» орденпа, «СССР аслă вĕрентĕвĕ енĕпе питĕ лайăх çитĕнӳсем тунăшăн» паллăпа, Пĕтĕм тĕнчери Мир канашĕн медалĕпе, Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе наградăланă.

Чăннипех мухтава тивĕçлĕ çын. Шăплат паттăрĕ.

■ **Галина МАТВЕЕВА.**
Вăрмар районĕ

ПРАЙМ. РЕГИОНАЛЬНЫЙ ВЫПУСК
ОБЗОР ПРАВОВОЙ ИНФОРМАЦИИ, ПОДГОТОВЛЕННЫЙ СПЕЦИАЛЬНО ДЛЯ ВАС
ГАРАНТ информационно-правовое обеспечение

**В Чувашии создается институт Уполномоченного по защите прав предпринимателей**

*Указ Главы Чувашской Республики от 13 февраля 2013 г. N 15 "О мерах по созданию благоприятных условий ведения предпринимательской деятельности в Чувашской Республике"*

В целях создания благоприятных условий ведения предпринимательской деятельности создается институт Уполномоченного по защите прав предпринимателей в Чувашской Республике, правовой статус которого будет определен законом Чувашской Республики.

Для поощрения предпринимателей, которые вносят значительный вклад в социально-экономическое развитие Чувашской Республики, будет учреждено почетное звание Чувашской Республики "Заслуженный предприниматель Чувашской Республики".

Кабинету Министров Чувашской Республики поручено подготовить соответствующие проекты законов Чувашской Республики.

Указ вступает в силу со дня его подписания.

**Из бюджета г. Шумерля выделяются средства на поддержку малого и среднего предпринимательства**

*Постановление Администрации г. Шумерли Чувашской Республики от 5 декабря 2012 г. N 943 "Об утверждении правил предоставления средств из бюджета города Шумерля на муниципальную поддержку малого и среднего предпринимательства в городе Шумерля"*

Правила регламентируют порядок предоставления средств из бюджета города Шумерля на поддержку начинающих субъектов малого предпринимательства в виде грантов.

Средства выделяются на возмещение затрат на участие в региональных, межрегиональных, зарубежных выставках, предоставление субсидий в целях приобретения по договорам лизинга техники и оборудования субъектам малого и среднего предпринимательства.

Средства предоставляются на основании договоров, заключаемых между Министерством экономического развития, промышленности и торговли Чувашской Республики и администрацией города Шумерля.

Контроль за целевым использованием средств осуществляется отделом экономики, предпринимательства и торговли и финансовым отделом администрации города.

Постановление вступает в силу со дня его официального опубликования.

**Идентификация клиентов в целях противодействия отмыванию преступных доходов: где можно найти необходимую информацию?**

*Информационное письмо Федеральной службы по финансовому мониторингу от 18 декабря 2012 г. № 22 "О получении сведений, предусмотренных пунктом 1.7 Положения о требованиях к идентификации клиентов и выгодоприобретателей, в том числе с учетом степени (уровня) риска совершения клиентом операций в целях легализации (отмывания) доходов, полученных преступным путем, и финансирования терроризма, утвержденного приказом Росфинмониторинга от 17 февраля 2011 № 59"*

Организации, проводящие операции с денежными средствами или иным имуществом, обязаны идентифицировать клиента, его представителя и(или) выгодоприобретателя. Этого требует Закон о противодействии отмыванию преступных доходов и финансированию терроризма.

В этих целях используются сведения, содержащиеся в ЕГРЮЛ и сводном госреестре, аккредитованных в нашей стране представительств иностранных компаний, а также данные об утерянных, недействительных паспортах, о паспортах умерших физлиц, об утерянных бланках паспортов.

Разъяснено, что соответствующую информацию можно найти на интернет-порталах следующих ведомств. На официальном сайте ФБУ ГРП при Минюсте России (www.palata.ru) в подразделе "Предоставление выписок из государственных реестров" раздела "Деятельность" разъяснено, как получить выписки из сводного государственного реестра аккредитованных в России представительств иностранных компаний.

Можно воспользоваться сайтом ФМС России (www.fms.gov.ru). В разделе "Проверка документа" содержится подраздел "Проверка действительности паспорта гражданина РФ".

На сайте ФНС России (www.nalog.ru) в подразделе "Проверь себя и контрагента" раздела "Электронные услуги" размещены сведения, внесенные в ЕГРЮЛ. Этот информационный ресурс также содержит сведения о юрлицах, связь с которыми по указанному ими адресу (месту нахождения), отраженному в реестре, отсутствует.

В связи с этим организациям рекомендуется использовать сведения, предоставляемые ФНС России, при оценке и присвоении степени (уровня) риска совершения клиентом операций, связанных с легализацией (отмыванием) преступных доходов и финансированием терроризма.

В настоящее время перечисленные сведения можно использовать в качестве дополнительных (вспомогательных) источников информации при проведении идентификации.

**С полными текстами документов Вы можете ознакомиться в системе ГАРАНТ.**
**ООО "Гарант-Чебоксары", тел. (8352) 43-95-25.**

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

*Сĕнӳ*

## Сакăр хут кĕрĕк тăхăннă...

Пĕчĕкçеçĕм кинĕм пур, сакăр хут кĕрĕк тăхăннă, ун кĕрĕкне кам хывать – вăл макăрать. Мĕн пирки сăмах пырать тетĕр тупмалли çак юмахра? Паллах, сухан пирки. Тĕрĕссипе, пирĕн несĕлĕмĕрсем унпа сĕм авалтанпах туслă пулнă. Эпир те уссине туйса тăратпăр, çавăнпа çуркуннесерен йăранĕ-йăранĕпе лартса хăваратпăр, пăхса ӳстеретпĕр, вăхăт çитсен тирпейлĕн пухса кĕртетпĕр.

Ăна халĕ те пӳртри кантăк умĕнчех çитĕнтерме пулать. Симĕç çулçисем апата витаминпа пуянлатнисĕр пуçне кăмăла çĕклеççĕ, çурхи кунсем çывхарнине аса илтереççĕ. Çакна кăна ан манăр: кун пек чухне пӳлĕмри чечексене имçамламалли тата апатлантармалли химикатсемпе усă курма юрамасть.

Симĕс сухан апат антарать, вар-хырăм ĕçне лайăхлатать. Çулçи витаминпа, каротинпа пуян пулнипе операци тӳссе ирттернĕ е вăрах чирлесе выртнă çынсемшĕн уйрăмах сиплĕ. Диабетпа нушаланакансем ăна юратса çиеççĕ – юнри сахăр шайне чакарать-мĕн.

Симĕс сухан юна тасатать, унри холестерина чакарать, ăна кĕвĕлме памасть, апла тăк тымар тытăмĕн чирĕпе, атеросклерозпа аптракансемшĕн, кĕсен-çăпанран тасалса пĕтейменнисемшĕн усăллă çимĕç шутланать. Унсăр пуçне шăнса пăсăлнинчен, грипран сипленмелли шанчăклă мел пулса тăрать.

Тăварланă купăстапа йӳçĕ кăшманран тата пан улмирен хатĕрленĕ салата çиелтен симĕс сухан турамĕпе илемлетсе сĕтел çине лартсан чун та ăшăнать, организм та С витаминпа пуянланать. Винегрета тутă кĕртет, кукăль ăшне хушсан техĕмлĕхпе тыткăнлать, хĕрлĕ кăшман яшкипе салата тутлăлатать.

Симĕс сухан çинĕ хыççăн çăвартан хăйне евĕрлĕ шăршă кĕресрен петрушка çулçине, лимон касăкне е хуппине чăмламалла.

Ытти çимĕç пекех ăна та виçеллĕ çимелле. Пĕчĕк ачасене тутанмалăх кăна памалла, унсăрăн апат ирĕлтерекен тытăм ытлашши ĕçлесе каять. Хырăмлăх е вун ик пумăк пыршин шыççипе чирлекенсен, юн каякансен тата эпилепсипе нушаланакансен рационне çак çимĕçе кĕртме юрамасть.

Çуркунне çывхарнă май пуçлă сухана пахчара лартса хăварасси пирки те халех шухăшламалла.

«Кăçал сухан ăнса пулмарĕ», – тет кӳршĕ хĕрарăмĕ. Тĕлĕнтĕм: пахчасем пирĕн юнашарах, çĕр пĕрешкелех. Эпир витри-витрипе пухрăмăр, хамăра ытлашши тесе тăван-пĕлĕше валеçсе патăмăр...

Асăннă культурăна туса илессин те вăрттăнлăхĕ пур çав. Вăрлăхлăх вĕтĕ сухана çĕр ăшăнса çитсен кăна лартмалла. Тăпра пиçсе çитмесен пырша каять. Ытла вĕттине те ырламаççĕ – вăл та туналлă пулать. Севока малтан марганцовкăн шупка шывĕнче тытатпăр, унтан ытлашши хуппинчен иртетпĕр, тымар ямалли вырăна çиелтен касса илетпĕр. Сухана çĕре вăйпа пусса кĕртмелле мар. Йăрана урлă пĕр-пĕринчен 30-40 сантиметрта 2-3 см тарăнăш йĕрсем чĕрсе севока пĕр-пĕринчен 20-25 сантиметртан вырнаçтармалла.

Вăл кĕле кăмăллать, азотлă минерал удобренисем ăна валли мар. Çĕрмен тислĕк сухана сиен кӳрет кăна. Ытлашши нӳрĕкре сĕткенлĕ çитĕнет, анчах шалтан кăпăшка пулать. Çавна май хуппи çурăлать.

Ăста пахчаçăсем сухана пухса кĕртес умĕн çеçкине иртме сĕнмеççĕ: ун тавралли çĕре уçса хурсан вара çимĕç патне çутă тата сывлăш ытларах пыраççĕ.

Йăран çинче вĕтĕ шăна ĕрчесрен тăварлă шывпа /10 литр пуçне – 1 стакан тăвар/ пĕрĕхтермелле.

Ку культурăна пĕр çĕрте чылай хушă ӳстерме юрамасть, малтанхи вырăна 2-3 çултан кăна таврăнмаллине çирĕплетеççĕ.

■ **В. МИХАЙЛОВА.**
Елчĕк районĕ

*Хаçата хуравлаççĕ*

## Хисеплĕ ят параççĕ

Шупашкар хулинче пурăнакан С.Вячеславов «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята шкулти секретарша тивĕçме пултарнипе-пултарманни пирки ăнлантарма ыйтса çырнине ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствине ярса патăмăр.

Владимир Иванов министр хуравланă тăрăх – Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ тата ăслăлăх министерствин 2010 çулхи çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ тата ăслăлăх министерствин ведомство наградисем çинчен» /Раççей Юстици министерствинче 2010 çулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче 17928 №-пе регистрациленĕ/ 580-мĕш хушăвĕпе çирĕплетнĕ йĕркепе «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята асăннă тытăмра, пĕтĕмĕшле пĕлӳ программисене пурнăça кĕртекен тата патшалăх аккредитацине илнĕ учрежденин организаципе право тата харпăрлăх формисене пăхмасăр, 12 çултан кая мар ĕçлекенсене тата квалификацин аслă е пĕрремĕш категорийĕ /çакă педагогсемпе вĕренӳ организацийĕсен ертӳçисене пырса тивет/ пуррисене параççĕ.

Çавăн пекех ку хисепе РФ Вĕренӳ тата ăслăлăх министерствин ĕçченĕсем, Раççей субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен вĕренӳ тытăмне йĕркелесе пыракан çыннисем вĕренӳпе воспитани ĕçне ăслăлăхăн тата культурăн хальхи çитĕнĕвĕсене тĕпе хурса йĕркелес тата çĕнетсе улăштарас, вĕренӳпе воспитание пĕрлĕхпе тивĕçтерес, çамрăк ăрăва ăс-хакăл, культура, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен аталантармашкăн пулăшас енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн; вĕренĕвĕн çĕнĕ технологийĕсене, занятисем хатĕрлесе ирттермелли, пĕлĕве тĕрĕслемелли /шăпах çаксем ачан хăй тĕллĕнлĕхне тата уйрăммăн вĕренмелли енĕсене аталантарма пулăшаççĕ/ паянхи мелсемпе меслетсене ĕçе кĕртнĕшĕн; çамрăксене практика тĕлĕшĕнчен хатĕрлес енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата вĕсен пултарулăхри пуçарулăхне ӳстернĕшĕн; вĕренӳ тата методика литератури, урокра усă курмалли пособи, приборпа оборудовани хатĕрлеме хастар хутшăннăшăн; пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тытăмра нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн; ачасемпе çамрăксене ăс тата воспитани пама тата пĕлӳ учрежденийĕн пурлăхпа техника никĕсне тĕреклетме хывнă тӳпешĕн тивĕçеççĕ.

Çӳлерех асăннине тĕпе хурса, пĕтĕмĕшле пĕлӳ тытăмĕнче 12 çултан кая мар ĕçленĕ тата çитĕнӳсем тунă секретаршăна та асăннă хисеплĕ ята памашкăн сĕнме пултараççĕ.

*Ыйту-хурав*

### Çĕнĕ реквизит тăрăх

**Харпăр хăй ĕçне йĕркеленĕ çынсен тата сиенлĕ условисемлĕ производствăна ерсе пыракансен обязательнăй пенси страхованийĕ валли бюджет классификацийĕн çĕнĕ кочĕ тăрăх взнос хывмалла теççĕ. Çакăн пирки тĕплĕнрех ăнлантарса параймăр-ши?**

**К.ПЕТРОВ.**

РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – çĕнĕлĕх федерацин 2012 çулхи раштавăн 3-мĕшĕнчи 243-мĕш саккунĕпе çыхăннă. Асăннă документпа килĕшӳллĕн 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен уйрăм предпринимательсемпе халăхăн харпăр хăйĕн ĕçне йĕркеленĕ ытти ушкăнĕ валли обязательнăй пенси страхованине тӳлемелли взносăн çирĕплетнĕ виçине палăртнă, пенсие маларах тухма ирĕк паракан сиенлĕ условисемлĕ ĕçпе тивĕçтерекенсем валли /федерацин «Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен» саккунĕн 27 статйин 1 пункчĕн 1-18 çум пункчĕсем тăрăх/ страхованин хушма взносĕсене кĕртнĕ.

Страховани взносĕ тӳлемелли бюджет классификацийĕн кочĕсене Раççей Пенси фончĕн сайтĕнче /http://www pfrf.ru/ot chuvash/pr releases/56890.html/ вырнаçтарнă, информацие çавăн пекех взнос тӳлекен хăй регистрациленнĕ Пенси фончĕн управленийĕнче илме пулать.

Кăрлач уйăхĕшĕн страховани взносĕсене ĕçпе тивĕçтерекенсен нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хывмалла пулнă, харпăр хăй ĕçне йĕркеленĕ граждансен кăçалхи раштавăн 31-мĕшĕччен куçармалла.

### Социаллă тӳлев тивĕçтерĕвĕ

**Социаллă тӳлевсене кредит учрежденийĕсенче илме пулнине пĕлетĕп-ха. Вĕсен шутне «Раççей ял хуçалăх банкĕ» АУОна кĕртнĕ-и?**

**Ю.ПОЛЯКОВА.**

Патшалăх пулăшăвĕн ирĕкĕ пуррисем патне социаллă компенсацисем, субсидисем, пособисем илсе çитерекен кредит организацийĕсен шутне асăннă тытăма та кĕртнĕ. Кăçалхи нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнче ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕпе Алла Самойловăпа «Раççей ял хуçалăх банкĕ» АУОн регионти филиалĕн ертӳçи Ирина Письменская республикăра пурăнакансене 2013 çулта социаллă пулăшу мерисемпе тивĕçтерессине пурнăçласа уйрăм çынсен счечĕсем çине укça куçармалли тата тӳлемелли йĕрке çинчен килĕшĕве алă пуснă. Асăннă документ тĕллевĕ: социаллă компенсацисене, субсидисене, пособисене илмелли меле тата вырăна суйламалли майсене анлăлатасси. Сăмах май, çав тӳлевсене халĕ асăннă банк урлă 13 пин ытла çын илсе тăрать. Вĕсем, тĕпрен илсен – ялта пурăнакансем.

**Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**